**Чăрăш йĕкелĕсем**

Речĕпе, йĕркеллĕ,
Çӳллĕ туратран
Чăрăшăн йĕкелĕ
Усăнса тăрать —

Юмахри вут-кайăк
Вĕçнĕ аташса,
Ир çывхарнă майăн
Ларнă пытанса...

Ман сире татасчĕ,
Шăкăр йĕкелсем:
Сирĕнпе выляччăр
Кӳршĕ ачисем.

Пӳрт çаврăннăçемĕн
Манăттăм йăлтах:
Вĕçленмен поэма
Вырттăр сунтăхрах.

...Эсĕ пуррине те
Халь манасчĕ ман, —
Тĕлĕке кĕретĕн,
Пурнăçра — курман.

Пурнăçра — çӳренĕ
Иккĕн ик йĕрпе.
Çил анчах кĕрленĕ

Çул аяккипе.

Çил çӳрет çил витĕр —
Çĕкленет тусан:
Тăр пĕччен тени те
Пĕччен мар нихçан.

Ĕмĕртен — юлташлăх:
Уйăха — хĕвел,
Ачана — ачашлăх,
Чăрăша — йĕкел.

Анăçĕшĕн — Тухăç,
Кĕпере — сăвай,
Маншăн — сан яту çеç,
Рита... Рита-тай!..

1954

*Айхи, Г. Чăрăш йĕкелĕсем : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 25-26.*